**Ыраш пусси — тыр пусси**

Ыраш пусси — тыр пусси
Выртать шăппăн хумханса;
Кас-кас килен çил касси
Иртет ун тăрăх шуса.

Пусу çинче, хĕвелте,
Тăри юрра шăратать.
Таçта инçе, пит çӳлте,
Тăрна сасси крăнклатать.

Çăра ыраш хушшинче
Автать карăш-путени;
Шенкер тӳпе маччинче
Шăвать шур пĕлĕт купи.

Сулмакланнă пучахсем
Усăнаççĕ çĕрелле,
Кăвак тĕрлĕ чечексем
Кармашаççĕ çӳлелле.

Тăтăш çемçе çил вĕрсе
Пучахсене ачашлать;
Утмăл турат чĕтренсе
Ырашпа тем юмахлать.

Туять пуль вăл: ӳлĕм çул

Тыр хушшинче ӳсмелли —

Çум курăкшăн вырăн çук.

Часах килет пĕтмелли!

Çавăнпа пуль вăл чĕтрет,

Кăвак чечекне сарса

Ырашсене илĕртет;

Калать тем пăшăлтатса.

Çулпа пыракан хресчен

Пăхать, сăнать таврана:

«Аван тырă — уйсенче!»

Çĕклет хаваслăх ăна.

1918

*Элкер, С. Ыраш пусси – тыр пусси : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 204-205.*